28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ДЕКАБРЬ 19 ЮНКУН 246 (6997) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Суйлавçăсен списокĕсене вăхăтра тата йĕркеллĕ туса хатĕрлемелле

Пĕтĕм совет халăхĕн уявĕ—СССР Верховный Советне суйламалли кун çывхарса килет. 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче пирĕн халăх, суйлав урнисем патне кайса, государство влаçĕн чи аслă органне суйламалли хăйĕн аслă тивĕçне пурнăçа кĕртет.

Совет çыннисем суйлав кунне пысăк хавхаланупа кĕтсе илеççĕ, мĕншĕн тесен Совет Союзĕнчи суйлавсем чи демократиллĕ суйлавсем, пĕтĕм халăх хутшăнакан суйлавсем пулса тăраççĕ. Сталинла Конституципе тата суйлав законĕнче кăтартса панă тăрăх, пирĕн çĕршывра 18 çула çитнĕ граждансем пурте суйлава хутшăнма пултараççĕ. Суд решенийĕ тăрăх суйлав прависĕр хăварнă тата ăсран тухнă çынсем кăна суйлава хутшăнма пултараймаççĕ.

«Тĕнчере,—тенĕ Сталин юлташ СССР Верховный Советне пĕрремĕш хут суйлас умĕн,—пирĕнни пек чăн-чăн ирĕклĕ, чăн-чăн демократиллĕ суйлавсем нихăçан та пулман. Çавăн пек тĕслĕхе истори урăх пĕлмест». Совет государствин чи аслă органне суйламалли çитес суйлавсем совет демократизмĕн аслă уявĕ пулса тăрĕç. Çавăнпа та çитес суйлавсене пирĕн пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илес пулать.

Суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли организациллĕ ĕçсем хушшинче суйлавçăсен списокĕсене туса хатĕрлесси чи пысăк ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Суйлавçăсен списокĕсене вăхăтра тата тĕрĕс туса хатĕрлемелле. Суйлавçăсен списокĕ вăл—гражданина суйлава хутшăнма ирĕк паракан документ пулса тăрать. Мĕншĕн те пулин суйлавçăсен списокне кĕмен суйлавçă, çав йăнăша вăхăтра тӳрлетмесен, суйлава хутшăнаймасăрах юлма пултарать.

Совет влаçĕ кашни гражданинах суйлав правипе туллин усă курма пултартăр, тесе тăрăшать. Çакă вăл суйлав Положенийĕнче суйлавçăсен списокĕсене тăвас йĕрке çинчен каласа хăварнинчен те уççăнах курăнса тăрать. Закон хушнă тăрăх, суйлавçăсен списокĕсене тĕплĕн тумалла, пĕр суйлавçăна та списока кĕртмесĕр хăвармалла мар, пĕр хушамата, ята, ашшĕ ятне те пăсса, урăхлатса, йăнăш çырса хăвармалла мар.

Суйлавçăсен списокĕсене туса хатĕрлесси вăл «пĕчĕк» ĕç мар, политикăллă пит пысăк ĕç пулса тăрать. Çав ĕçе ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсем тума тивĕçлĕ, çав ĕçе тăвассишĕн вĕсем ответлă пулса тăраççĕ. Çак ĕçе туса ирттернĕ чухне вырăнти Совет аппарачĕ хăйĕн ĕçне, политикăллă çирĕплĕхне, хăйĕн культурлăхне кăтартса памалла. Суйлавçăсен списокĕсене халĕ 4 çул хушши пынă вăрçă вĕçленнĕ хыççăн туса хатĕрленине манма юрамасть. Халăх хисепĕнче вăрçă пулнă пирки чылай улшăнусем пулнă, çав улшăнусене тĕплĕн шута илес пулать.

Суйлавçăсен списокĕсене туса хатĕрлес ĕçе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи тата ялсенчи Совечĕсен вĕреннĕ çынсене—совет, профсоюз, комсомол активне, государство учрежденийĕсемпе общество организацийĕсен представителĕсене, учительсене, аслă шкулсемпе техникумсен студенчĕсене, вăтам шкулсенчи аслă классенче вĕренекенсене хутшăнтармалла. Списока кĕртмелли суйлавçăсен хисепне пĕлес тесе, суйлавçăсен килĕсем тăрăх çӳремелле.

Пирĕн республикăра ял Совечĕсем халĕ суйлавçăсен списокĕсене тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, хăшпĕр çĕрте списоксене малтанлăха туса çитерне те ĕнтĕ. Анчах суйлавçăсен списокĕсене тăвас ĕçре пур чухне те ĕçе закон хушнă пек тĕплĕн туса пыни çук-ха. Елчĕк районĕнче, сăмахран, суйлавçăсен списокĕсене ял Совечĕсем хуçалăх кĕнекисенчен çырса илсе хатĕрленипех лăпланса ларма шухăшлаççĕ. Суйлавçăсем патне килĕрен çӳресе тĕрĕслемеççĕ. Елчĕк районĕнчи Вăрăм Хăва ял Советĕнчи суйлав участокĕнче 260 суйлавçă кăна шутланать пулин те, суйлавçăсен списокне хуçалăх кĕнекисенчен пăхса çырса илсе çеç хатĕрлеççĕ. Паллах, списока апла çеç туни çителĕксĕр пулнă пулĕччĕ. Ун пек çеç тусан, суйлавçăсем списока кĕмесĕр юлас, суйлавçăсен хушамачĕ-ячĕсене пăтратас хăрушлăх пур. Уйрăм çуртсене кĕрсе тĕрĕслесе суйлавçăсен списокĕсене тунипе те çитмест-ха. Суйлавçăсен списокĕсене кашни суйлав участокĕнче алфавит тăрăх, СССР Верховный Совет Президиумĕ çирĕплетнĕ формăпа туса хатĕрлемелле, вăл списоксене тĕрĕс, йăнăшсемсĕр çырса хумалла.

Анчах ку ĕçре те йăнăшсем пурри палăрать. Чкаловски районри Чăваш Ишек ял Советĕнче (ял Совет председателĕ Матвеев юлташ) списока тунă чухне алфавита пăхăнса пымасçĕ. Çавăн пекех Хирти Пикшик ял Советĕнче те (председателĕ Крымов юлташ) списока алфавита пăхăнмасăр хатĕрлеççĕ. Сăкăт ял Советĕнче вара списоксене тума ку тарана çитсе те тытăнман.

Муркаш районĕнчи Матьăк ял Советĕнче (председателĕ Павлов) тахçанах вилнĕ çынна суйлавçăсен списокне кĕртнĕ пулнă. Çав йĕркесĕрлĕхе ял Совет руководителĕсем: вăл вилни нумай пулмасть, тесе ăнлантарма хăтланнă. Атапай ял Советĕнче 1927 çулта çуралнисене те çамрăк тесе списока кĕртменнисем пулнă. Паллах, çакăн пек çитменлĕхсене тӳсме нипеле те май çук. 18 çула çитнĕ кашни çыннах, суд решенипе ăна суйлав прависĕр хăварман пулсан, е вăл ăсран тухман пулсан, суйлавçăсен списокне кĕртмелле. Çапла тума пире Сталинла Конституци тата суйлав законĕ хушаççĕ.

Суйлав кунĕ çитиччен вăтăр кун маларах суйлавçăсен списокĕсене туса хатĕрлесе, вĕсене суйлавçăсем патне çитермелле. Районсемпе ял Совечĕсене вара списоксем туса хатĕрлеме 20 кун ытларах анчах вăхăт юлать. Çав вăхăтпа туллин усă курса ĕçлемелле.

Суйлавçăсене туса хатĕрленĕ списоксемпе паллаштарасси çинчен те тĕплĕн шухăшласа пăхмалла пулать. Пирĕн çакна асра тытмалла: кашни суйлавçă унăн ятне списока тĕрĕс е тĕрĕс мар кĕртнине тĕрĕслесе пăхма тивĕç. Списока йăнăш кĕртни çинчен суйлавçăсем панă заявленисене вырăнти Советсем тата халăх сучĕсем суйлав законĕнче хушнă вăхăтран кая юлмасăр пăхса тухмалла. Суйлавçăсен списокне туса хатĕрленĕ хыççăн суйлавçăсем урăх вырăна тухса каяççĕ пулсан, вĕсен вырăнти Советра «Суйлама право паракан удостоверени» илмелле. Агитаторсен çакăн çинчен суйлавçăсене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Суйлавçăсен списокĕсене вăхăтра тата кирлĕ пек туса хатĕрлессишĕн вырăнти Советсен хальхи вăхăтра çине тăрса ĕçлемелле.

Сталин юлташ отпускран таврăннă

Ĕнер, декабрĕн 17-мĕшĕнче, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ отпускран Мускава таврăннă та хăйĕн ĕçĕсене туса пыма тытăннă. (ТАСС).

ПРОФСОЮЗ ОРГАНИЗАЦИЙĔСЕМ АЧАСЕМШĔН ТĂРĂШНИ

ВЦСПС секретариачĕ профсоюз организацийĕсем ачасем хушшинче мĕнле ĕçлени çинчен сӳтсе-явнă. Кăçалхи çу кунĕсенче 3.403 пионер лагерĕ, 821 сыватакан ача площадки ĕçленĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал вĕсем самай ытларах пулнă. Çу каçиччен рабочисен, служащисен тата çар çыннисен 1.653.900 ачи каннă, иртнĕ çулхинчен 500.000 ача ытларах каннă. Профсоюзсен центральный комитечĕсем нумайĕшĕ ку ĕçе ăнăçлăн ирттернĕ, пионер лагерĕсен çурчĕсене вăхăтра юсанă, вара вĕсенче ачасене вăхăтра йышăнма тытăннă, пионер лагерĕсем валли подсобнăй хуçалăхсенче туса илнĕ апат-çимĕçе çителĕклĕ уйăрса панă.

ВЦСПС секретариачĕ ачасен çуллахи канăвне лайăх ирттернĕшĕн профсоюзсен 23 центральный комитетне грамотăсем парса наградăланă. Профсоюз организацисене халех пионер лагерĕсен çурчĕсене юсамашкăн тытăнма хушнă, çĕнĕ çуртсем тума хушнă. 1946 çулхи çу кунĕсенче кăçалхинчен те ытларах ачасем канмалла пултăр тесе йышăннă.

(ТАСС).

«СОВЕТСКАЯ ЖЕНЩИНА» ЯТЛĂ ÇĔНĔ ЖУРНАЛ

«Советская женщина» ятлă обществăпа политикăллă тата литературăпа художествăллă çĕнĕ журналăн пĕрремĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Çав журнал Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕç кĕрешекен комитечĕпе ВЦСПС органĕ пулса тăрать. Ăна вырăс, акăлчан, француз тата нимĕç чĕлхисемпе пичетлесе кăлараççĕ. Вăл икĕ уйăхра пĕр хут тухса тăмалла. (ТАСС).

ВЫРĂС ЮРРИСЕН ГОСУДАРСТВО ХОРĔ МУСКАВА ТАВРĂННИ

Вырăс юррисен государство хорĕ икĕ уйăх хушши ют çĕршывсенче пулнă. Ăна РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ А. В. Свешников ертсе пынă. Çав хор Австрире, Чехословакире, Венгрире тата Германире 8 хулара пулнă, çар чаçĕсем умĕнче тата граждансем умĕнче туха-туха юрланă. Пĕр Вена хулинче кăна 8 концерт панă. Г[illegible]агăра 5 концерт панă.

Хор программинче вырăс юррисем, вырăс тата Хĕвеланăç Европа классикĕсен произведенийĕсем пулнă. Римский-Корсаковпа Танеев сочиненийĕсене юрласа кăтартнă. Хор çавăн пекех чылай юрăсене чехла юрласа панă.

Хор концерчĕсем пур çĕрте те питĕ ăнăçлăн иртнĕ.

Халĕ çав хор Мускава таврăннă.

(ТАСС).

Çĕршыв СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленет

Участоксенчи суйлав комиссисен составне çирĕплетни

Çак кунсенче Елчĕк районĕнчи ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕ участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне çирĕплетнĕ. Районĕпе мĕнпурĕ 37 суйлав участокĕ тунă, участоксенчи суйлав комиссийĕсене 323 çынна çирĕплетнĕ. Вĕсем хушшинче 171 арçын, 152 хĕрарăм; 155 коммунист, 54 комсомолец; орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă çынсем 58.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне халăх хăйĕн чи лайăх ывăлĕ-хĕрĕсене, Отечественнăй вăрçăра хастарлă кĕрешнĕ çынсене, тылри хĕрӳ ĕçре палăрнисене суйланă. Патрекель участокĕнчи суйлав комиссийĕн председателĕ пулса ĕçлеме «Осоавиахим» колхозри колхозника, ВКП(б) членне Николай Аристархович Ястребова юлташа çирĕплетнĕ. Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулса нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн Правительство ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăланă. Çав участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ пулма Тимирязев ячĕпе тăракан колхозри колхозника, ВКП(б) членне, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе «За отвагу» медаль кавалерне Алексей Нилович Козлов юлташа çирĕплетнĕ. Участокри суйлав комиссийĕн секретарĕ пулма Патрекелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкул учительне Владимир Ефимович Пушков юлташа çирĕплетнĕ. Правительство ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне çавăн пекех «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕн кавалерне Константин Григорьевич Смычков учителе, «Красный часовой» колхоз членне, Александр Невский орденĕн тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерне Алексей Петрович Муравьев юлташа, Елчĕкри вăтам шкул директорне Ипа Петровна Петрова юлташа, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланăскерне, Хĕрлĕ Çартан демобилизаци шучĕпе таврăннă Сильвестр Капитонович Носов юлташа, фронтра паттăррăн çапăçнăшăн Ленин орденĕ тата «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕ илме тивĕçлĕ пулнăскерне, тата ыттисене те çирĕплетнĕ.

ШĂХАСАН. Райсовет исполкомĕ участоксенчи суйлав комиссисене çирĕплетнĕ. Районра мĕнпурĕ 27 суйлав участокĕ туса хунă. Суйлав комиссийĕсен составне халăхăн чи лайăх представителĕсене çирĕплетнĕ. Суйлав комиссийĕсен членĕсем хушшинче: Пантелеймон Макарович Макаров— районри коммунистсен организацийĕнчен, Антонина Даниловна Данилова—пуçламĕшпе вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн районри организацийĕнчен, Антонина Васильевна Васильева—Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксенчен, Мефодий Сергеевич Сергеев — районри коммунистсен организацийĕнчен, Александр Спиридонович Спиридонов—Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн районри организацийĕнчен, Иван Иванович Иванов — «Победа» колхозри колхозниксенчен тата ыттисем те—пурĕ 263 çын çирĕплетнĕ.

АГИТАТОРСЕМ

Агитатор-коммунист Петр Васильев Шĕкĕрти «Новый путь» колхозра виççĕмĕш бригадăри колхозниксем хушшинче ĕçлет. Ку таранччен вăл 5 заняти ирттернĕ. Кам та пулин занятие пырайман пулсан, ун патне агитатор тепĕр куннех пырса çитет. Иртнĕ тема тăрăх каласать, колхозник мĕнле ăнланнине тĕрĕслет. Кашни калаçăва вырăнти фактсемпе çыхăнтарать. Васильев агитаторăн участокĕнче 45 суйлавçă. Вĕсем кашнипех суйлав кунне ĕçри çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Васильев юлташ вĕсене государство умĕнчи парăмсене хăвăртрах парса татасси çинчен те яланах каласа панă. Çавăнпа та унăн участокĕнчи колхозниксем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçланă.

Агитатор Васильев юлташ, колхозниксене суйлав Положенине ăнлантарса панисĕр пуçне, «Совет Государстви», «Советлă социализмлă общество», «Сталинла Конституци» ятлă темăсем тăрăх уйрăм калаçусем ирттернĕ. Вăл хăй ВКП(б) историне вĕренет, конспектсем çырса пырать.

«Новый путь» колхозра 6 коммунист. Вĕсен ĕçĕнче лайăх примерсем сахал мар. Коммунист-агитатор Алексей Владимиров юлташ колхозра ревизи комиссин членĕ пулса ĕçлет. Колхозниксене суйлав Положенине ăнлантарса парас тĕлĕшпе вăл хăйĕн участокĕнче 4 заняти ирттернĕ. Ăна çирĕплетсе панă участокра занятие çӳреме пултарайман ватă суйлавçăсем 12 çын. Вĕсем патне вăл яланах каять, ăнланмалла, çăмăл чĕлхепе калаçусем ирттерет. Ватă çынсем агитатор пырасса кĕтсе тăраççĕ, унăн калаçуне итлесшĕн хавхаланаççĕ. Час-часах суйлавçăсем пĕртанлăх правн çинчен каласа панă чухне: «мĕншĕн-ха ку суйлавра 23 çула çитнĕ граждансенчен пуçласа депутата суйлаççĕ, иртнĕ суйлавра 18 çула çитнисем те суйланнăччĕ?»—тесе тата ытти ыйтусем параççĕ. Çак ыйтусем çине Владимиров юлташ яланах тĕрĕс ответсем парать. Колхозниксен пĕр ыйтуне те ответлемесĕр хăвармаççĕ Шĕкĕрти агитаторсем.

Кашни эрнекунах колхозниксем пĕр-пĕр колхозник килне пухăнаççĕ. Çакăн пек туни колхозниксене суйлав законне тĕплĕн ăнлантарма май парать. Ку тарана çитсе пĕтĕмпе агитколлектив членĕсем 18 заняти ирттернĕ. Çак занятисенче хуçалăх ĕçĕсем çинчен те çахал мар калаçусем пулнă. Агитатор-коммунистсем Н. Алексеев, Е. Семенов, М. Макаров юлташсем 3-шер—4-шар заняти ирттернĕ. Парторганизацин секретарĕ Антон Васильев агитаторсене яланах пулăшса тăрать, вĕсен ĕçне тĕрĕслет, ăнланман ыйтусене ăнлантарса парать. Агитаторсем уйрăм ыйтусене тĕплĕн пĕлсе тăччăр тесе, семинарсем туса ирттереççĕ. Кунсăр пуçне агитаторсенчен пуçламĕш парторганизацинче отчет итлеççĕ.

Агитатор-коммунистсем тимлĕн ĕçленипе пула, «Новый путь» колхоз государство умĕнчи парăмсене те пĕтĕмĕшпех парса татнă. Колхоз 1946 çулшăн государствăна 26 центнер аш-какай, 1316 литр сĕт, 44 килограмм çăм тата ытти продуктсем те панă.

Суракине хатĕрленсе пынă май, сĕлĕ, урпа, пăрçа вăрлăхĕсене сортласа хунă. Колхоз тимĕрçи К. Титов юлташ 6 плуг юсанă. Колхоз вăрлăх фондне хывса çитернĕ, кăçал ĕçкунĕ пуçне пĕр килограмм та 400 грамм тĕштырă валеçсе пама ĕмĕтленеççĕ.

С. ШАДИН.

Шăхасан районĕ.

Çамрăк суйлавçăсем

ВĂРМАР. Çамрăк суйлавçăсене СССР Верховный Советне суйламалли Положенине ăнлантарас тĕлĕшпе районра 87 кружок ĕçлет, вĕсенче пурĕ 268 комсомолец тата союзра тăман çамрăксем 324 çын вĕренеççĕ. «Дружба» колхозра 127 çамрăк суйлав Положенийĕпе Сталинла Конституцие кружоксенче вĕренсе пĕтернĕ. Халĕ ку колхозри нумай комсомолецсем хăйсем агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, колхозниксем патне килĕрен çӳресе суйлав законне ăнлантараççĕ.

Çавăн пекех Чулкасри «Свобода» колхозра та 69 çамрăк суйлав Положенине кружокра вĕренсе пĕтернĕ. Кунта В. Матросов агитатор ертсе пынипе час-часах çамрăк суйлавçăсен пухăвĕсене ирттереççĕ. Вăл пухусенче çамрăксене интереслентерекен ыйтусем тăрăх докладсем пулаççĕ. Художествăллă пултарулăх кружокĕсем концертсем параççĕ.

«Дружба» колхозра та комсомолецсем пуçарнипе çамрăк суйлавçăсен пухăвне висĕ хутчен ирттернĕ. Юлашки кунсенче иртнĕ пухура ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Андреев юлташ «Висĕ орденлă Ленинла комсомолăн кунçулĕ» темăпа доклад туса панă. Юлашкинчен драмкружок спектакль лартса панă, хор кружокĕ çĕнĕ юрăсем юрланă.

Суйлав кунне хатĕрленнĕ май, «Маяк» колхозри художествăллă пултарулăх кружокĕсем лайăх ĕçлеме пуçларĕç. Виталий Грачев комсомолец ертсе пыракан драмкружок час-часах çĕнĕ постановкăсем парать. Пьесăсене тăрăшса хатĕрленине пула, спектакльсем ăнăçлă иртеççĕ. Колхоз çамрăкĕсен хор кружокĕнче çĕнĕ юрăсем вĕренеççĕ, шкул ачисем Сталинла Конституци çинчен çырнă сăвăсене тухса калаççĕ.

ВЛКСМ райкомĕ çумĕнчи докладчиксен группи хăйĕн ĕçне нумай лайăхлатрĕ. Докладчиксен группинче тăракан 20 çынна кашнине уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем кашниех суйлавçăсен пухăвĕнче 1—2-шер доклад туса панă.

М. ПАВЛОВА.

КОЛХОЗРИ АЧАСЕН ÇУРЧĔ

СĔМĔРЛЕ. «Комбайн» колхоз пур ĕçсене тăвас тĕлĕшпе те районра малта пырать. Демобилизаци йĕркипе киле таврăннисене ĕçе вырнаçтарас, вăрçăра вилнисен çемьисене тата инвалидсене пулăшас тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. Çав вăхăтрах вăрçă вăхăтĕнче тăлăха тăрса юлнă ачасене пăхса ӳстерессине те манăçа хăвармасть.

1945 çул пуçламăшĕнче, колхоз председателĕ И. Осипов тăрăшнипе, колхозра ачасен çурчĕ организациленĕ.

Колхоз правленийĕ ача çурчĕ валли уйрăм çурт тупса, вуннăпĕр тăлăх ачана пĕр çĕре пухнă. Вĕсен кашнин уйрăм кроватьсем пур, вĕсене лайăх тумтирсем çĕлетсе панă, кашниннех çăматăсем пур. Ачасене пăхаканĕ Васькина юлташ тăрăшса ĕçлет, вăл ачасене кунне висĕ хут апат пĕçерсе çитерет, ачасене яланах таса çӳретме тăрăшать. Нумайĕшĕ вĕсенчен шкула çӳреççĕ. Пушă вăхăтсенче ачасем колхозникăсене е çăпатасем туса парса ытти ĕçсенче пулăшаççĕ.

Вуннăпĕр ачаран иккĕшĕ кăçал ФЗО шкулне хăйсен ирĕкĕпе вĕренме кайрĕç.

А. ТАНЬКОВ.

Шупашкар хуличчи парти активĕн пухăвĕ

1945 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче Чăвашсен академи театрĕнче Шупашкар хуличчи парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. СССР Верховный Совет суйлавĕсене хатĕрленнĕ май хулари парти организацийĕн задачисем çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар горкомĕн секретарĕ **И. М. Чарыков** юлташ доклад туса пачĕ.

Хăйĕн докладĕнче Чарыков юлташ СССР Верховный Советне суйласси çинчен Указ кăларнă хыççăн хулари парторганизацисем чылай ĕçсем туса ирттернине палăртрĕ. Округсенчи тата участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне çирĕплетнĕ, агитколлективсене туса хунă, суйлав участокĕсем çумĕнче агитпунктсем организациленĕ, суйлавçăсен списокĕсене тăвас ĕç вĕçленсе пырать. Предприятисемпе учрежденисенче тата килхуçи хĕрарăмĕсемпе ватă суйлавçăсем хушшинче вĕсен килĕсене çӳресе суйлав законне ăнлантарса парас ĕçе анлăн сарнă.

Агитаципе пропаганда ĕçне лайăхрах туса пырас шутпа ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ агитаторсен семинарĕсене час-часах ирттерет, совет суйлав законне, Ленинпа Сталин совет государстви çинчен вĕрентнине ăнлантарса парас шутпа агитаторсем валли докладсемпе лекцисем туса ирттернĕ.

Анчах та, тет Чарыков юлташ, партин пуçламĕш организацийĕсенчен хăшпĕрисем ку тарана çитсе те çак политикăллă пысăк кампание тивĕçлипе хакламаççĕ-ха. Сăмахран, Академи театрĕнчи, Маслопромри, Прокуратурăри парти организацийĕсем ку тарана çитсе те хăйсене çирĕплетсе панă участоксенчи суйлавçăсем хушшинче агитаципе пропаганда ĕçне тума пуçламан. Вĕсем кашни коммунист çак ĕçре тимлĕн ĕçлемелли çинчен манса кайнă.

Чарыков юлташ агитаципе пропаганда ĕçне хулари предприятисемпе учрежденисенчи производство программине пурнăçа кĕртессипе çыхăнтарма кирли çинче чарăнса тăрать. Партин пуçламĕш организацийĕсен çар çыннисемпе вĕсен çемьисен нушисем çине тимлĕн пăхма кирли çинчен, вĕсене тивĕçлĕ пулăшу парасси çинчен, çапла майпа вĕсене çĕршыври обществăпа политикăллă пурнăçа активлăн хутшăнтарасси çинчен каласа парать.

Юлашкинчен, Чарыков юлташ чи лайăх агитаторсемпе производствăра лайăх ĕçлекенсен шучĕпе парти речĕсене ӳстерессишĕн тăрăшса ĕçлеме кирлине палăртса хăварать.

Чарыков юлташ докладĕ хыççăн пуçланнă прение 13 çын тухса каларĕ. Кошелев юлташ директор пулса тăракан заводри партбюро секретарĕ **Иванов** юлташ тухса каланине палăртса хăвармалла. Вăл каланă тăрăх, СССР Верховный Советне суйламалли Положение вĕренме рабочисем хушшинче 3 кружок организациленĕ. Кунсăр пуçне, килхуçи хĕрарăмĕсене тата ватă суйлавçăсене ăнлантарма 36 агитатор уйăрнă. Суйлав Положенине вĕреннĕ хыççăн, халĕ хаçатсенче пичетленекен суйлав материалĕсене вĕренеççĕ. Суйлав участокĕ çумĕнче агитпункт организациленĕ.

Çитес суйлавсене хатĕрленнĕ май заводра социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Суйлав ячĕпе стахановла вахтăна тăнă Урнанаев, Гаркавый рабочисем тата ыттисем те пĕр сменăра 6,5 нормăна çити тултараççĕ. Кашни кунах графикран иртсе ĕçлесе пыраççĕ. Пирĕн парторганизаци, тет вăл, СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленессипе çыхăнса тăракан хамăр задачăсене ăнăçлăн татса парĕ.

Иванов юлташ (пир-авăр фабрики) СССР-ти государство влаçĕн чи аслă органне суйлама хатĕрленнĕ май фабрикăри рабочисемпе работницăсем хушшинче политикăллă тата производствăллă хастарлăх ӳссе пыни çинчен каласа парать. Атманов, Пирожкова, Яшина тата ытти нумай рабочисем сменăра икшер норма тума пуçларĕç, ытти нумай рабочисемпе работницăсем те хăйсен нормисене ытлашшипех тултарма пуçларĕç. Çавăн пекех вăл 11-мĕш суйлав участокĕнчи агитпункт ĕçне лайăхлатас шутпа хулари çыхăну конторинчен пулăшу ыйтни çинчен калать. Вĕсенчен пулăшу ыйтнинчен нимĕн те тухмарĕ, мĕншĕн тесен 4 метр проводпа репродукторшăн çав тери хаклă ыйтрĕç, тет вăл.

Хула Совет исполкомĕн председателĕ **Аникин** юлташ суйлавçăсен хисепĕ ӳссе пыни çинчен калакан интереслă цифрăсем кăтартса пачĕ. СССР Верховный Советне пĕрремĕш хут суйланă хыççăн, хулари суйлавçăсен йышĕ промышленность предприятийĕсенчи рабочисен шучĕпе кăна икĕ хута яхăн ӳснĕ. 1937 çулта 16.900 суйлавçă пулнă пулсан, 1945 çулта 26.000 суйлавçă шутланать. Çакă ĕнтĕ,—тет Аникин юлташ,—СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе тата лайăхрах ĕçлеме хушать.

Сӳтсе-явнă ыйту тăрăх парти активĕ ятарласа решени йышăнчĕ. Вăл решенире хулари пуçламĕш парторганизацисене суйлав участокĕсем çумĕнчи агитпунктсенче агитаципе пропаганда тата культпросвет ĕçне тĕпренех лайăхлатма хушса хăварчĕ. Çавăн пекех предприятисенче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, куллен кирлĕ таварсене ытларах туса кăларас тĕлĕшпе ĕçлеме, ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатма хушрĕ, ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă хастарлăхне ертсе пырас тĕлĕшпе коммунистсем малти вырăнта пулмалла тесе асăрхаттарса хăварчĕ.

Муркаш районĕнчи коммунистсен пухăвĕ

МУРКАШ. Декабрĕн 16-мĕшĕнче кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май районри парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен Ильин юлташ доклад туса пачĕ.

Партин районри организацийĕ суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тунă. Суйлав участокĕсем çумне партипе комсомолăн 16 организацине çирĕплетнĕ, парти организацийĕсен секретарĕсемпе висĕ хут семинар ирттернĕ. Кунсăр пуçне, районри интеллигенципе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсен пухăвĕсене ирттернĕ. Районра мĕнпурĕ 21 суйлав участокĕ тунă, участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне çирĕплетнĕ. Суйлав законне ăнлантарас тĕлĕшпе районра 620 агитатор ĕçлет, вĕсенчен 230 çын—Хĕрлĕ Çартан демобилизаци шучĕпе таврăннă юлташсем. Агитаци ĕçне уйрăмăнах Янăш, Чуманкасси, Пашалукасси, Шĕвĕш ял Совечĕсенче лайăх туса пыраççĕ. Пашалукасси ял Советĕнче, сăмахран, суйлав законне вĕренме 12 кружок организациленĕ, вĕсем кашниех 5-шер занятирен кая мар ирттернĕ. Кунта стена хаçачĕ вăхăтра тухса тăрать, ятарласа витрина организациленĕ, агитаторсем суйлав законне ăнлантарас тĕлĕшпе килĕрен çӳреççĕ.

Анчах хăшпĕр çĕрте суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Шурча, Матьăк ял Совечĕсенче ку тарана çитсе те пĕр кружок та ĕçе тытăнман, çамрăк суйлавçăсем хушшинче те нимĕн те тумаççĕ.

Районĕпе 2000 ытла çамрăк суйлавçă шутланать пулин те, вĕсене суйлав законне ăнлантарас тĕлĕшпе кружоксем сахал организациленĕ.

Ильин юлташ участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратнă чухне тата суйлавçăсен списокĕсене тунă çĕрте палăрнă çитменлĕхсем çинчен калать. Çатракасси ял Советĕнче судпа айăпланнă çынна суйлав комиссийĕн членĕ пулма кандидата тăратнă пулнă. Матьăк ял Советĕнче суйлавçăсен списокĕсене хуçалăх кĕнекисенчен пăхса кăна тăваççĕ.

Матьăк ял Советĕнче суйлавçăсен списокне тахçанах вилнĕ çынна кĕртнĕ пулнă. Ял Совет председателĕ Павлов юлташ çав йăнăша: вăл çын нумаях пулмасть вилнĕ, тесе каланипе витме хăтланнă.

Чуманкасси ял Советĕнче участокри суйлав комиссийĕ çуртне хатĕрлеме, кабинăсем тума хăмасем хатĕрленĕ, хĕрлĕ пусма илнĕ, клуба илемлетнĕ.

Пухура тухса калакансем районри парткабинет япăх ĕçленине уйрăмăнах палăртса хăварчĕç. Çак тарана çитсе те парткабинетра суйлав çинчен пĕр доклад кăна пулса иртнĕ. Парткабинет заведующийĕ Астрова юлташ хăй япăх ĕçленине лампăсем çуккипе ăнлантарса пама хăтланать.

Доклад тăрăх мĕнпурĕ 13 çын тухса каларĕç. ВКП(б) Обкомĕн шкулсен отделĕн заведующийĕ Шалфеева юлташ хăйĕн сăмахĕнче районри парти организацийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе малашнехи задачăсем çинчен каларĕ. Суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе туса пыракан агитаципе пропаганда ĕçне хуçалăхпа политикăллă ĕçсемпе çыхăнтарма пĕлмелли çинчен асăрхаттарчĕ.

Сӳтсе-явнă ыйту тăрăх пуху тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Районăн укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатмалла

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. 1945 çулхи IV-мĕш кварталти финанс планне тултармалли уйăхлăхра Хирлукасси, Туктамăш, Чурпай, Киватикасси ял Совечĕсем юлса пыраççĕ. Асăннă ял Совечĕсем IV-мĕш кварталти финанс планне пурĕ те 10—15 процент кăна тултарнă.

Киватикасси ял Советĕнче укçа-тенкĕ пухас ĕçе ятти активистсенчен хăшпĕрисем хăйсем чăрмантарса пыраççĕ. Биров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ В. Кузнецов государство умĕнче 1000 тенкĕ, колхоз бригадирĕсем А. Аксаковăпа А. Петрейкина тата Л. Рябинин юлташем 1000—1500 тенкĕ, ферма заведующийĕ Е. Морозова 1800 тенкĕ парăма кĕнĕ.

П. ТИХОНОВ

Смоленск хулипе облаçĕнче фашистла нимĕç захватчикĕсем тунă тискер ĕçсемшĕн суд туни

ДЕКАБРĔН 16-МĔШĔНЧИ КАÇХИ ЛАРУ

СМОЛЕНСК, декабрĕн 16-мĕшĕ (ТАСС). Каçхи ларура чи малтан Эрих Мюллертан ыйтса тĕпчесçĕ.

— Тыткăна лекнĕ совет çыннисене 1941 çулхи октябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йышлăн персе вĕлернĕ çĕре эпĕ хутшăннă,—тесе каласа парать айăпланакан.—1943 çулхи сентябрь уйăхĕнче эпĕ Осиповичи хулинчен инçех мар яла кайнă карательнăй экспедицире пулнă. Çав экспедици вăхăтĕнче вырăнти 50 çынна чĕрĕллех çунтарса янă.

Судра тата çакă паллă пулса тăрать: Мюллер. Генчке пекех, Каспля ялĕнчи мирлĕ çынсене персе вĕлерес ĕçе хутшăннă.

Суд малалла айăпланакан Гейнц Винклертан ыйтма пуçлать. Винклер тыткăнри çынсене тата гражданла халăха персе вĕлерес ĕçе хутшăннине тата мирлĕ пурăнакан çынсене Германие ĕçлеме ирĕксĕр ăсатас ĕçе хутшăннине тунмасть.

Государство айăплаканĕ ыйтсан, айăпланакан тыткăна лекнĕ совет çыннисем валли Ярцевăра тунă лагерь çинчен каласа парать. Хĕлле 40 градуслă шартлама сивĕре те лагерьти çурта хутман. Начарланса кайнă пирки чирленĕ çынсене, медицина енчен пулăшу курман совет çыннисене пере-пере вĕлернине, мăшкăласа. «çăмăл пултăр тесе персе яни» тесе ят панă. Винклер хăй чирлĕ 4 красноармеецa персе вĕлернĕ. Айăпланакан каланă тăрăх, Смоленск хулинчи Германи комендатуринчен куллен 35 совет çынние персе вĕлерме илсе кайнă.

Судра тата айăпланакан Вайс совет хĕрарăмĕсене пусмăрлани паллă пулса тăрать, çакна Вайс хăйĕнчен малтан ыйтса тĕпченĕ чухне тунмă пулнă.

Каçхи лару çакăнпа хупăнать. Декабрĕн 17-мĕшĕнчи кăнтăрлахи 12 сехетчен суд перерыв тăвать.

ДЕКАБРĔН 17-МĔШĔНЧИ ИРХИ ЛАРУ

СМОЛЕНСК, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхи лару Германи çарĕн 14-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 350-мĕш полкра пулнă Йозеф Райшмана допрос тунипе пуçланать. Райшман нимĕçсем Смоленскра тата ун çывăхĕнчи ялсенче тунă нумай тискер ĕçсене активлăн хутшăннă. 1941 çулхи октябрь уйăхĕнчи пĕр каçхине Смоленск урамĕсем тăрăх советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисен колонни пынă. Райшман, ытти гитлерла бандитсемпе пĕрле, колоннăна пăшалсенчен пеме тытăннă. Тыткăна лекнĕ çар çыннисен колонни пынă Рославль шоссе çулĕ çинче 500 метр тăршшĕнче кăна ирхине 50 виле ытла тупнă. Çул тăршшĕпех вилнĕ çынсем выртнă. Райшман ирĕксĕрех йышăннă тăрăх, çак «юнлă каçра» советăн пиншер воинĕсене пĕтерсе тăкнă.

Райшман Монастырщина поселокĕнче мирлĕ граждăнла халăха нумайăн персе вĕлернĕ чухне тата Смоленск çывăхĕнчи темиçе ялта, Борисов хулинче 12.000 совет гражданне ытла пĕтерсе тăкнă çĕрте пулнă. Судра тĕпченĕ вăхăтра Райшман совет хĕрарăмĕсемпе хĕрĕсене пусмăрлани те палăрать.

Государство айăплаканĕ (айăпланакана): Монастырщина поселокĕнче персе вĕлернĕ мирлĕ çынсем хушшинче ачасем пулнă-и?

Райшман: пулнă.

Айăпланакана панă ыйтусем тăрăх çакă палăрать: нимĕç ирсĕрĕсем çарти службăра усă куракан йытăсене хĕрарăмсем, стариксем тата ачасем çине вĕсĕкĕртсе ярса çав тери тискер ĕçсем тунă.

Кун хыççăн суд свидетельсенчен ыйтма тытăнать.

Свидетельсем кăтартса панинчен Смоленск хулипе облаçĕнче гитлеровецсем советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене тата граждăнла халăха массăллăн вĕлерсе пыни уççăн курăнать.

Н. М. Алексеева свидетельница çапла каласа парать: нимĕçсем эрнере икĕ хут—кĕçнерникунсемпе шăматкунсенче—тăтăшах нумай арçынсемпе хĕрарăмсене тата ачасене персе пăрахма илсе килетчĕç. Вĕсене вилĕ шăтăкĕ патне турттарса пыратчĕç. Пĕчĕк ачасене амăшĕсен аллинчен туртса илетчĕç те шăтăка пăрахатчĕç, пысăккисене вара пуçран персе вĕлеретчĕç. Вилĕ шăтăкĕсене çĕрпе тата çеремпе витсе пытарса хуратчĕç.

Персе пăрахиччен çынсен тумтирĕсене хывса тата ытти хаклă япалисене туртса илетчĕç. Çапла, пĕрре ирхине, тет свидетельница, тĕксĕм-кăвак машина килчĕ те шăтăк патĕнче чарăнчĕ. Машина çинче ларса пынă гитлеровецсем çын виллисене кăларса ывăтма тытăнчĕç, вара вĕсене унтах çĕрпе витсе пытарса хучĕç. Кăвак машина—«душегубка» çав районра тăтăшах курăнма тытăнчĕ. 1942 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа август уйăхĕн вĕçне çитиччен вăл кунта çын виллисем турттарса тăчĕ.

Смоленскра пурăнакан П. В. Брызгалова Пысăк Совет урамĕнче советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене нумайăн вĕлернине курнă. Свидетельница çапла кăтартса парать: тыткăна лекнĕ çар çыннисене персе пăрахни çинчен пĕлсен, вăл вилнисем хушшинче хăйĕн тăванĕсене шырама кайнă, унăн 14 тăванĕ, упăшки тата ывăлĕ фронтра пулнă. Вĕлернисем патне ăна яман, вăл вилĕ çынсем питĕ нумай пулнине кăна курнă.

1941 çулхи кĕркунне, нимĕçсем советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене хăваласа кайни çинчен пĕлсе, Брызгалова свидетельница кукăльсем тата çĕрулми пĕçерсе хатĕрленĕ, вĕсене выçă çыннисене пама хăтланса пăхнă. Анчах та ăна колонна патне çывăха яман. Вăл тыткăна лекнĕ пĕр çын ӳкнине курнă та ăна пулăшасшăн пулнă. Вăл тыткăна лекнĕ çынна темиçе кунлăха хăй патне илсе, кăштах тăрантарнă хыççăн лагере илсе килме пулни çинчен нимĕç патрульне ăнлантарса панă. Çакна илтсен, нимĕç салтакĕ красноармеецa пуçран персе çавăнтах вĕлернĕ. Тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕнчен инçе мар пурăннă пирки, свидетельница лагерьтен кашни кунах 40—50 виле çĕклесе тухнине курнă. Вĕсене çарамасланатарса пытарнă.

Юлашкинчен свидетельница гитлеровецсем Курченово ялĕнче пурăнакан 180 çынна—хĕрарăмсене, арçынсене тата ачасене—персе пăрахни çинчен каласа кăтартать.

Я. Г. Гаврилов свидетеле, Красильщина ялĕнчи ытти арçынсемпе пĕрле, Смоленскри лагере илсе пынă. Кунта сарайĕнче, питех те йывăр условисенче, тыткăна лекнĕ çар çыннисемпе граждăнла халăх 3000 çын ытла пулнă. Питĕ тăвăр пулнă пирки çынсем ларса сывăрнă. Çĕрĕк çĕрулмипе тата темĕнле пăтранчăк шӳрпепе тăрантарнă. Лагерьте кашни кунах 100 çынна яхăн вилнĕ. Чĕрĕ юлнисем питĕ начарланнă, вĕсем урисемпе аран-аран ярса пуснă. Гитлеровецсем лагерьте ятарласах çавăн пек йывăр условисем тунă, совет çыннисем умĕнче унта пур-пĕрех вилес шăпа тăнă.

Малалла свидетельница Е. А. Ефименко каласа парать. 1941 çулта, тет вăл, эпĕ Смоленск хулинчи Коммуна урамĕнче 9-мĕш çуртра пурăнаттăм. Кĕркунне, пĕр каçхине, эпир пăшалпа пенине илтрĕмĕр. Тул çутăласпа эпĕ урама тухрăм та питĕ хăрушă япала куртăм. Совет урамĕнче тăршшĕпех персе пăрахнă красноармеецсемпе Хĕрлĕ Çар командирĕсен виллисем выртатчĕç. Манăн ачасем виллисем хушшинче хăйсен ашшĕне шырама чупса кайрĕç. Вĕсем часах каялла таврăнчĕç те персе пăрахнисем хушшинче йывăррăн тата çăмăллăн аманнисем нумай тесе мана каласа пачĕç. Çăмăллăн аманнисем ăçта кирлĕ-унта шуса тарма тăрăшнă, анчах та нимĕçсем пĕтĕм хулипех шыраса çӳреме тытăнчĕç, вĕсем часах аманнă красноармеецсене Хĕрлĕ Çар Çурчĕ патне пухрĕç те вĕсене унта персе вĕлерчĕç.

Прокурор ыйтăвĕ çине ответлесе, Ефименко свидетельница Монастырщинăра пурăннă Ф. И. Лядникова каласа панисене пĕлтерет. Лядникова ăна Монастырщина патĕнче гитлеровецсем пĕр шăтăка хĕрарăмсене, стариксемпе ачасене хăваласа пухса вĕсене персе вĕлерни çинчен каласа панă. Фашистсем никама та хĕрхенмен. Чĕрĕ юлтăр тесе амăшĕ виле шăтăкĕ хĕррине хунă кăкăр ачине те нимĕçсем атăпа тапса шăтăка тĕксе янă.

А. И. Петрова свидетельница суда каласа панă тăрăх, нимĕçсем Смоленска çĕмĕрсе кĕрсенех совет çыннисене хаяррăн пĕтерсе пыма тытăннă. Çынсене пĕтĕм çемьипе хăйсен çурчĕсенчен хăвала-хăвала кăларнă. Апат-çимĕççĕр тата çуртсăр тăрса юлнă çынсем чирленĕ, кунсеренех çĕршерĕн вилнĕ. 1942 çулхи июлĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсем Верхние Садки районне хупăрласа илнĕ. Ирхине çак районра пурăнакансене пурне те çуртсенчен хăваласа кăларнă. Кăшт тăхтасан, тĕксĕм-кăвак икĕ машина пырса çитнĕ, вĕсен кантăксем пулман, хыçра алăк пулнă. Совет çыннисем кусем «душегубкăсем» пулнине ăнланса илнĕ, унта лекнисене хăрушă вилĕм кĕтнине пĕлнĕ. Часах телейсĕр çынсене машинăна хăваласа кĕртме тытăннă, ачасене амăшĕсенчен турта-турта илнĕ те, вутă тиенĕ пекех, машинăна ывăтнă. Свидетельницăна пытанма май килнĕ. Ун патĕнчен нимĕç машинисем темиçе хут та ирте-ирте кайнă, машинăсенче хуллен йынăшнисем илтĕннĕ. 15-мĕшĕнчи кăнтăрлахи икĕ сехет тĕлне Верхние Садкире пурăннă çынсене пурне те нимĕçсем турттарса кайнă. Каярахпа палăрнă тăрăх, вĕсене Магелянщина ялне илсе пынă та, машинăра вилнĕскерсене, шăтăка пытарнă. Хăйсен ирсĕр ĕçĕсене пытарса хăварас тесе, нимĕçсем виле шăтăкĕсене çĕрпе танлаштарнă та тракторсемпе çӳресе хытарса лартнă.

Смоленска нимĕçсем йышăннă хыççăн, тесе каласа парать И. С. Богданов свидетель, хулара апат-çимĕç курăнми пулчĕ. 1941 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕнче свидетель Бобыли ялне кайнă. Рославль шоссе çулĕ тăрăх каялла таврăннă чухне вăл советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисен пысăк колоннине курнă. Çынсем урисемпе аран-аран ярса пуснă, мĕншĕн тесен вĕсем питĕ начарланса кайнă пулнă. Колонна хыçĕнче нимĕç автоматчикĕсен ушкăнĕ пынă. Смоленска çитиччен çулăн икĕ енĕпе те тăршшĕпех çын вилнисем выртнă. Октябрĕн малтанхи кунĕсенче Богданов советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисен тепĕр колоннине курнă, вĕсене Рославльрен Смоленска илсе пынă пулнă.

Нимĕç командованийĕ Смоленск хулинчи мĕнпур арçынсене ĕç биржине пыма хушнă. Çакăн хыççăн Богданова Смоленскри электростанцие, вăл ĕлĕк ĕçленĕ çĕре, янă. Унта 350—400 çын пулнă. Вĕсене пăтранчăк шӳрпе тата кунне пĕр касăк çăкăр евĕрлĕскер панă. Выçă пирки çынсем шыçăнса кайнă, утса çӳреме те пултараймаи. Смоленск хулинчи рабочисене, тыткăна лекнĕ çар çыннисене, йывăр ĕçпе ывăнса начарланнăскерсене, гитлеровецсем пĕр хĕрхенмесĕр пере-пере пăрахнă. Персе пăрахнă хыççăн хăшпĕрисем темиçешер сехет хушши вилеймесĕр выртнă, вĕсене вара вĕри шлакпа витсе хунă.

Богданов свидетельрен ыйтса тĕпченĕ хыççăн ирхи лару хупăнать.

ДЕКАБРĔН 17-МĔШĔНЧИ КАÇХИ ЛАРУ

Каçхи ларура свидетельсенчен малалла ыйтса пĕлнĕ.

М. А. Ляхова свидетельница çапла калать: Смоленск хулинче советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисем валли тунă госпиталь чăн-чăн «вилĕм çурчĕ» пулнă, унта выçăпа, начарланса кайнипе, чирлисене сиплемен пирки кунсеренех вуншар çын вилнĕ.

Кун хыççăн свидетель С. А. Ладнов, Духовщина районĕнчи Титово хуторĕнчи колхозник, каласа парать.

— Нимĕçсем Титово ялне йышăнчĕç те çийĕнчех унта пурăнакансене саратма тата вĕлерме тытăнчĕç,—тет вăл.— 1942 çулхи майăн 29-мĕшĕнче колхозниксене пурне те çуртсенчен хăваласа кăларчĕç те ял вĕçне пухрĕç. Гитлеровецсем шăтăк патĕнче çынсене пăшалсемпе пулеметсенчен персе вĕлерчĕç, яла вара пĕтĕмпех çунтарса ячĕç. Ладнов хăй ăнсăртран кăна вилĕмрен çăлăнса юлнă. Унăн арăмĕпе хĕрĕ çав кун вилнĕ. Титово хуторĕнче пурăнакан 130 çынран 38 çын кăна чĕрĕ юлнă.

Суда свидетельсем пĕрин хыççăн тепри кĕрсе тухаççĕ. А. А. Перебякина свидетельница, Каспля ялĕнче пурăннăскер, нимĕçсем çав ялта тунă юнлă тискер ĕçсем çинчен каласа парать. Гитлеровецсем ялтан 157 çынна, çав шутрах унăн упăшкине те, илсе тухнă та вĕсене çав кунах персе вĕлернĕ.

Н. Г. Виткина свидетельница, Глинка районĕнчи Боровки ялĕнче пурăнаканскер, фашистла палачсем Глинка поселокĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен суда каласа кăтартать. Унта нимĕçсем нумай хĕрарăмсемпе стариксене тата ачасене шкула хăваласа пухнă та вĕсене тискеррĕн асаплантарнă. Пĕчĕк ачасене стена çумне çапса вĕлернĕ, вĕсен амăшĕсене тата аслăрах ачасене персе пăрахнă. Мончино тата Ляхово ялĕсенче пурăнакан мирлĕ çынсене те çавăн пек асаплантарса вĕлернĕ.

Смоленск хулинче пурăнакан Е. И. Баранова свидетельницăна 1942 çулта ирĕксĕрлесе Германие хăваласа кайнă. Вăл фашистла каторгăна кайнă чухне çул çинче мĕнле йывăр хĕнхурсем курма тивни çинчен каласа парать.

Кун хыççăнхи свидетель, Смоленскри ватă врач П. И. Кесарев çапла каласа парать: нимĕçсем совет хĕрарăмĕсемпе ачисене тискеррĕн асаплантарса вĕлерсе пынă, çавăн пекех тата гитлеровецсем сывлăх учрежденийĕсене ятарласа çаратса пĕтерсе пынă, тет.

Кесарев свидетельрен ыйтнă хыççăн каçхи лару хупăнать.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

Декабрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи лару

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн декабрĕн 17-мĕшĕнчи ирхи ларăвне уçнă хыççăн, Трибунал председателĕ Лоуренс тăватă заявлени тунă.

Хăйĕн пĕрремĕш заявленийĕнче Лоуренс çакна палăртнă: хаçатсенче айăпланакансем каласа панисем пичетленсе тухнă, вĕсене хаçатсене хӳтĕлекенсем урлă панă. Çак япалана Трибунал ниме юрăхсăр ĕç тесе шутлать, малашне çавăн пек япаласем ан пулччăр тесе, çирĕп мерăсем йышăнма шутлать. Трибунал хӳтĕлекенсене айăпланакансем каласа панисене хаçатсене пама хăтланма юраманни çинчен асăрхаттарать. Хӳтĕлекенсем Трибунал уставĕ тунă йĕркесене пăхăнса тăмалла. Хăйсен умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртес ĕç çине вĕсем хăйсен профессиллĕ тивĕçлĕхĕ енчен пăхмалла. Историллĕ вырăн йышăнса тăракан çак процесс участникĕсем пурте хăйсен çав тери пысăк ответлăхне ăнланса тăмалла, тесе шутлать Трибунал. Процесс епле пыни çинчен пĕтĕм тĕнчери обществăна тĕплĕн пĕлтерсе тăрсан, пĕтĕм тĕнчери пресса хăйĕн тивĕçне пурнăçа кĕртсе пырĕ. Анчах та хаçат представителĕсем те вĕсем ответлă пулни çинчен ăнланса илмелле.

Ытти заявленисем процесс мĕнле пыни çинчен тунă заявленисем пулнă.

Çакăн хыççăн Америка енчен айăплакан Гаррис капитан сăмах илет. Хăйĕн сăмахĕнче айăплакан нимĕç фашисчĕсем Совет Союзĕн оккупациленĕ территорийĕсене çаратма, нимĕçлетме тăрăшни çинчен каласа парать. Эпир халĕ вуласа паракан документсем, тет Гаррис, çакна кăтартĕç: пĕрремĕшĕнчен, нимĕç каварлашусисем Совет Союзĕнчи кăнтăрпа кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчен апат-çимĕçпе чĕртаварсене пурне те Германие илсе тухса кайма шутланă. Иккĕмĕшĕнчен, вĕсем юриех тата ятарласах миллионшар вырăс çыннине выçă вĕлерессине организациленĕ. Вилмесĕр юлнă вырăс çыннисем пĕтĕмĕшпех Германи кусĕнчен пăхса тăмалла пултăр тесе, фашистсем Совет Союзĕн çурçĕр районĕсенчи промышленноçа пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма шутланă. Галиции пĕр пайне тата Балтика тăрăхĕнчи çĕршывсене пурне те вĕсем Германи составне кĕртме, Крыма, Атăл тăрăхĕнчи облаçсене тата Баку çывăхĕнчи районсене Германи колонийĕсем туса хума шутланă.

Çакăн хыççăн айăплакан айăпланакан Геринг хĕвелтухăçĕнчи экономикăллă штаб текенскер валли кăларнă директивăна вуласа парать.

Вăл директивăна 1941 çулхи июль уйăхĕнче çырнă. Çав директива тăрăх, хĕвелтухăçĕнчи экономика штабĕ пĕтĕм экономикăна тытса тăмалла пулнă. Документ айăпланакан Геринг Совет Союзне çаратнăшăн айăплă пулнине кăтартса парать. 1941 çулхи майăн 23-мĕшĕнче çырнă тепĕр документ, тепĕр тĕслĕ каласан, Совет Союзĕ çине тапăниччен туса хатĕрленĕскер, хĕвелтухăçĕнче экономика тĕлĕшпе тытса пымалли политикăна паллă туса хăварать. Çав документра каланă тăрăх, хăйсене кирлинчен ытларах продукци паракан Совет Союзĕн территорийĕсем хура тăпраллă районсенче пулассĕ, çавăнпа та хура тăпраллă районсене çавăрса илни «пирĕн алла» нумай тĕштырă пама пултарать. Çакна пула вара паха промышленность центрĕсене—Мускавпа Санкт-Петербурга тата пĕтĕм çурçĕр зонине снабженисĕр тăратса хăварма пулать.

Промышленноçа, тенĕ малалла çав документра, тырпул тухăçлă пулакан хăшпĕр районсенче кăна упраса хăвармалла. Çав территоринчи производствăллă вăйсене упраса хăварассишĕн Германи пĕртте тăрăшмасть. Çав территоринчи нимĕç çарĕсене тăрантма кирлĕ апат-çимĕçе хатĕрлессишĕн çеç Германин тăрăшмалла. Çав районсенчи халăх, пуринчен ытла хуласенчи халăх, выçă пурăнассине кĕтсе илме хатĕр пулса тăмалла. Кунти халăха Çĕпĕре куçарса каймалла. Германи çак ĕçсене хăвăрт туса, хăйне кирлĕ апат-çимĕçе хăвăрт тытса илме пултарсан çеç вăл хăйне усă тума пултарать. Выльăх-чĕрлĕхе васкаса тытса илмелле те ăна çар аллине памалла тата Германие илсе каймалла. Мĕншĕн тесен, нимĕнле выльăх апачĕ те юлман пирки майракаллă выльăх тата сыснасем çывăхри вăхăтрах пĕтсе ларма пултараççĕ. Нимĕçсем çавсене пурне те хăйсем валли тытса илмесен, çывăхри вăхăтрах халăх выльăха çисе ярать те Германи унтан нимпе усă та кураймасть.

Документра малалла çапла каланă: «фюрер хушнă тăрăх, кĕркуннерех ашкакай нормине чакармалла, нимĕçсене паракан снабженине ӳстермелле. Çак ĕçе Российăри выльăх-чĕрлĕхе ним шеллемесĕр тытса илнипе тумалла, пуринчен ытла транспорт енчен Германие илсе каймалла лайăх районсенче çакна пурнăçламалла, малашне кăнтăр Россия питне Европа еннелле çавăрмалла. Ытлашши шутлакан апат-çимĕçе вăл Германипе Европăна парса тăма тивĕçлĕ. Пирĕн Российăна ырхан ялхуçалăхĕ патне таварассине хăвăртлатмалла. Çав районри вуншар миллион çынсем вилсе пĕтмелле е вĕсене Çĕпĕре куçармалла. Ытти çĕртен апат-çимĕç кӳрсе халăха вилĕмрен тата выçлăхран хăтарма тăрăшмалла мар. апат-çимĕçе пĕтĕмпех Европăна турттарса каймалла. Кăнтăр Российăран Çурçĕр Российăна апат-çимĕç турттарса кайни Германин çар хăватне пĕчĕклетнĕ пулĕччĕ. Вăрçăн виççĕмĕш çулĕнче хĕçпăшаллă вăйсене Германи территорийĕнчен е Германи шутне кĕрекен территорисенчен апат-çимĕç парса тăмалла марри пуриншĕн те паллă пулмалла. Ку акă мĕне пĕлтерет: хĕçпăшаллă вăйсен виçĕ пайĕнчен пĕри пĕтĕмĕшпех Франци шучĕпе тăранса пурăнмалла. Ытти икĕ пайĕ, тен кунтан та ытларах пайĕ, апат-çимĕç таврашне хĕвелтухăçĕнчи çĕрсенчен илсе тăмалла. Пирĕн задача—вырăссен апат-çимĕç ресурсĕсене Европăра çимелли плана кĕртесси пулса тăрать. Ку ĕнтĕ, паллах, промышленноçа пĕтересси патне тата халăхăн нумай пайне пĕтересси патне илсе пырать».

Германи фашисчĕсем вырăс халăхĕ пирки тытнă варварла плана çак документра каланă усал сăмахсемпе каланинчен уçăрах тата усалтарах каласа пама та май çук, тет айăплакан. Малалла, çав документра каланă тăрăх, Россия хăй çимелли апат-çимĕçе пур майсемпе те чакарса пымалла. Çапла вара, тет малалла айăплакан, Германи фашисчĕсем ним айăплă пулман миллионшар граждансене вĕлермелли плана тĕплĕн туса хунă. Ку вăл малтанах палăртса хурса вĕлерни пулнă, ăна этем тени ăнланма та пултарас çук. Айăпланакансенчен кашниех халĕ вĕсене айăплакан преступленисем çинчен, çав тĕллевсем çинчен питĕ лайăх пĕлсе тăнă.

Малалла айăплакан айăпланакан Борман хатĕрленĕ питĕ секретлă меморандума вуласа парать. 1941 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче çырнă çак документа Пĕрлешӳллĕ Штатсен контрразведки тытса илнĕ. Вăл документра 1941 çулхи июлĕн 16-мĕшĕнче Гитлер ставкинче пулса иртнĕ канашлу çинчен çырса хунă. Канашлура Розенберг, Ламерс, Кейтель, Геринг тата Борман пулнă. Çак документ каварлашуçăсем Совет Союзĕ пирки тунă плана тăрă шыв çине кăларать, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери обществăллă шухăша гитлеровецсем улталама шутланине кăтартса парать.

Канашлура сăмах тухса каласа, Гитлер çапла каланă: «Пирĕн тĕллевсене пĕтĕм тĕнчерен пытарса тăни питĕ паха, хамăр мĕн тăвас тенине эпир хамăр анчах пĕлсе тăни питĕ паха. Ытлашши декларацисем пичетлесе кăларнипе пирĕн ĕçе кăткăслантармалла мар. Çавăн пек декларацисем туни ытлашши пулĕччĕ, мĕншĕн тесен, вăй пулсан эпир пурне те тума пултаратпăр. Тĕнчене эпир мĕн каласси тактика ыйтăвĕсемпе сыхăнса тăмалла. Кунта эпир Норвегире. Данире, Голландире тата Бельгире тунă пекех тумалла. Çак çĕршывсем пирки те эпир хамăр тĕллевсем çинчен чăннипе кăтартса паман. Малашне те çавăн пекех туса пымалла. Çавăн пирки те эпир малашне те çаксене палăртса пырăпăр: пĕр-пĕр çĕршыва эпир ăна ертсе пыма, унти районсенче пурăнакан çынсен интересĕсемпе вĕсен хăрушсăрлăхĕшĕн, вĕсенче йĕрке тăвассишĕн, апат-çимĕç парса тăрассишĕн, куçса çӳреме май парассишĕн тата ытти пирки кирлĕ пулнипе оккупацилерĕмĕр, тесе каламалла. Тĕнчене пирĕн çак ĕçсене пурне те эпир унта пурăнакан халăхшăн тăватпăр тесе каламалла. Çакăнпа пĕрлех эпир персе пăрахасси умĕнче, хăваласа кăларасси умĕнче чарăнса тăмăпăр. Анчах та эпир никама та хамăршăн тăшмансем тăвасшăн мар. Çавăнпа та пирĕн мĕнле те пулин миссие пурнăçа кĕртнĕ пек кăтартса памалла. Çав вăхăтрах эпир хамăр çĕршывран нихăçан та тухса каяс çуккине пирĕн ăнланса илмелле. Çапла вара хамăра хамăр тыткаласси пирĕн çакăн пек пулмалла: «Çак ыйтăва тĕпренех татса пама чăрмантараканнине тумалла мар, çĕнĕ йĕрке тума вăрттăн хатĕрленмелле тата, кунсăр пуçне, эпир ирĕке кăларакансем пулатпăр тесе, уççăнах палăртса пымалла. Крымра нимĕçсем кăна пурăнмалла, ытти халăхсене хăваласа кăлармалла. Галицин австриецсен аллинче пулнă пайĕ Германи территорийĕ пулса тăмалла. Эпир халĕ Румынипе лайăх сыхăнса тăратпăр, анчах та малашне вăл сыхăнусем епле пулассине никам та пĕлсе тăмасть. Çакна пирĕн асра тытса тăмалла, çакна шута илсе, пирĕн чикĕсене палăртса хăвармалла. Ытти халăхсен ирĕкĕнчен нимĕн те килмелле ан пултăр. Румынипе çыхăнса тăрассине пирĕн çак принципа шута илсе туса хумалла. Çак принципа шута илсе, пирĕн хамăра кирлĕ пысăк татăк кукăле касса илмелле, çавна пулă пирĕн, пĕрремĕшĕнчен, пуç пулса тăмалла, иккĕмĕшĕнчен—çĕршывсене тытса тăмалла, виççĕмĕшĕнчен—эксплуатацилемелле. Вырăссем халĕ пирĕн фронт линийĕ хыçĕнче партизанла вăрçă пуçласа ярассĕ. Партизанла çак вăрçă пирĕншĕн те хăшпĕр енчен усăллă. Çакна пула эпир пире хирĕç тăракансене пурне те вĕлерсе тăкма пултаратпăр. Пирĕн çак принципсене пурнăçа кĕртмелле: Уралтан хĕвеланăçнерехре çар вăйĕ туса хума нихăçан та урăх май памалла мар. Çак тĕллеве 100 çул вăрçмалла пулсан та çав-савах пурнăçа кĕртмелле. Фюрер хыççăн пулаканесен кашниннех çакна пĕлсе тăмалла: Уралтан хĕвеланăçнерехре ют халăхсен ниепле çар вăйĕ те пулмасан çеç пирĕн импери хăрушсăрлăхра пурăнма пултарать. Çав района тĕрлĕ хăрушлăхсенчен упрас задачăна хăй çине Германи анчах илме пултарать. Тимĕр пек çирĕп принцип пирĕн çапла пулмалла: нимĕçсемсĕр пуçне никам та хĕçпăшал çĕклесе çӳреме пултараймасть».

Малалла çак çырура çапла çырса хунă: «Балтика тăрăхĕнчи çĕршывсем пурте Германие кĕмелле тенине фюрер уйрăмăнах палăртса хăварать. Çак вăхăтрах Крым, Крымран çурçĕртерехри чылай территорипе пĕрле, Германи территорийĕ пулса тăни çинчен пĕлтермелле. Вăл район мĕн тери пысăк пулма пултарать, çавăн чухлĕ пысăк пулмалла». «Атăл çинчи колони те, Баку таврашĕнчи район пекех, Германи империне кĕмеллине фюрер уйрăмăнах палăртса хăварать. Çак район вăл Германи концессийĕ (çар колонийĕ!) пулса тăмалла».

Малалла айăплакан Балтика тăрăхĕнчи çĕршывсемпе Белоруссири рейхскомиссарсем валли Розенберг кăларнă инструкцие вуласа парать. Çав директивăра каланă тăрăх, вăл çĕршывсенчен рейхскомиссарсем Германи протекторачĕ туса хумалла, унти халăха нимĕçлетмелле. Балтика тинĕсĕ Германишĕн шалти тинĕс пулса тăмалла. Тивĕççĕр элементсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкмалла.

1941 çулхи сентябрĕн 16-мĕшĕнче канашлу пулса иртнĕ. Вăл канашлура Геринг, Бакке, Вейдель генерал, Нагель генерал тата ыттисем те пулнă. Канашлура Германи оккупациленĕ совет районĕсене эксплоатацилес ыйтăва сӳтсе явнă. Хăйĕн выступленийĕнче Геринг снабжени ĕçĕнче çак принципсемпе ĕçлесе тăма сĕннĕ: чи малтан тата пуринчен ытла фронтри çарсене снабжени парса тăмалла; иккĕмĕшĕнчен, тăшман çĕрĕ çинчи çарсене снабжени парса тăмалла; виççĕмĕшĕнчен, Германире тăракан çарсене снабжени парса тăмалла; тăваттăмĕшĕнчен, Германири гражданла халăха снабжени парса тăмалла, юлашкинчен тин вара оккупациленĕ территори çинчи халăха снабжени памалла.

Айăпланакан Розенбергăн айăпĕ çине кăтартса, айăплакан Розенберга оккупациленĕ территорисен ĕçĕпе министр пулма лартни çинчен калакан Гитлер декретне вуласа парать. Кунсăр пуçне вăл Розенберг сăмахне вуласа парать. Çав сăмахра Розенберг Германи халăхне тăрантарасси тĕп задача пулса тăни çинчен калать. «Хамăр çине кирек епле обязательствăсем илсе, вырăс çыннисене тăрантма кирли çинчен эпир пачах шутламастпăр». Хăйĕн çав сăмахĕнчех Розенберг çапла каланă: вăрçă вăрçасси тата оккупациленĕ территорие тытса тăрасси çинчен Гаага хулинче йышăннă килĕшӳ ССР Союзне тивмест, мĕншĕн тесен ССР Союзне аркатса тăкнă çĕршыв тесе шутламалла, тенĕ. Çапла вара каварлашуçăсем Гаагăра йышăннă килĕшĕве пăснипе Розенберг хăех йышăнать.

Нимĕç промышленникĕсемпе финансисчĕсем оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсене чура туса хумалли программăна пурнăça кĕртме Гиммлера пулăшнипе кăтартса парас шутпа, айăплакан Кельн хулинче Курт фон Шрейдер барон банкирăн архивĕнче тупнă çырăва илсе кăтартать. Вăл çырура Гиммлер патне барон çапла çырнă: манăн хисеплĕ рейхсфюрер, сире империн шалти ĕçĕсен министрĕ пулма уйăрса лартнине эпĕ пысăк савăнăçпа пĕлтĕм. Çак çырупа усă курса, эпĕ сире çĕнĕ вырăн йышăннă ятпа чĕререн тав тăватăп. Çак министерствăн ĕçĕсемпе ертсе пырассинче халĕ сирĕн аллă пулмалла, çавăнпа та пурте, пуринчен ытла сирĕн тусăрсем, çав вырăна фюрер сире лартнипе çав тери савăнаççĕ. Сире пулăшас тĕлĕшпе мĕн кирлине эпир пурне те тăвасса шанса тăрăр. Сирĕн тусăрсем кăçал сирĕн алла «ятарласа тумалли тĕллевсем валли» пĕр миллион рейхсмарка пама йышăнни çинчен эпĕ сире савăнса пĕлтеретĕп. Çав укçана пухас ĕçе хутшăннă çынсен списокне эпĕ сире часах ярса парăп. Манран хамран тата манăн çемьерен ырлăх суннине йышăнсамăр. Сире хисеплесе юлатăп. Хайль Гитлер! Сирĕн фон Шрейдер».

Çак çырăва 1943 çулхи августăн 27-мĕшĕнче çырнă. 1943 çулхи сентябрĕн 21-мĕшĕнче Гиммлер патне Шрейдер çĕнĕ çыру янă. Вăл çырура çапла каланă: «Хисеплĕ рейхсфюрер, çак уйăхри 14-мĕш числара эсир çырнă ырă çырушăн сире чĕререн тав тăватăп. Вăл çыру мана телейлĕ туса хучĕ.

Çакăнпа пĕрле сирĕн пата эпĕ сирĕн валли пĕр миллион марка укçа пухас ĕçе хутшăннă çынсен списокне ярса паратăп. Вăл укçана сирĕн тусăрсем пухнă. Уйрăм задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе сире пулăшнипе эпир çав тери савăнтăмăр. Хисеплĕ рейхсфюрер, сире телей сунатăп. Сире хисеплесе юлатăп. Хайль Гитлер! Шрейдер».

Шрейдер çырупа пĕрле Гиммлер фондне укçа хывнă нимĕç промышленникĕсен списокне янă. Вăл списока айăплакан судра вуласа паман. Списокра çак çынсен ячĕсене каланă: Сименс—Шуккерт Веркке хуçи Виндель 100.000 марка панă, Вăтам Германин хурçă трестĕн хуçи Флик 100.000 марка панă. Германипе Америкăн нефть обществинчи государство советникĕ Гельферих, Дрезден банкĕнчи Раше, Берлинри коммерчески банкри Рейнгард, Шрейдер—100.000-шер марка панă.

(Лару вĕçĕ çитес номерте пулать).

Индонезири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Батавирен çапла пĕлтерет: Суматра утравĕ çинче губернатор ĕçĕсене туса тăракан Амир Индонези республикин премьер-министрĕпе Шарирпа канашланă. Канашлу хыççăн Амир çапла каланă: Суматра утравĕ çинчи индонезиецсем Ява утравĕ çинчи индонезиецсене пулăшса тăраççĕ (Амир Суматра утравĕ çинчи губернатор ĕçĕсене Индонези правительстви хушнипе тăвать).

Амир тата унăн виçĕ сотрудникĕ Батавие Суматра çинчи Падангран пынă. Пресс-конференцире Амир çапла каланă: «Эпир, Индонезин ытти пайĕсенче пурăнакан халăх пекех, голландецсем сĕнекен доминион статутне йышăнмастпăр, эпир Индонези пĕтĕмĕшпех никама пăхăнмасăр тăракан государство пултăр тесе ыйтатпăр. Суматра утравĕ çинчи юхăм пĕтĕм Индонезийĕпе пыракан кĕрешĕвĕн чи вăйлă юхăмĕ пулса тăрать. Эпир çапла шутлатпăр: Ява утравĕ çинчи халăха хирĕç пыракан кирек мĕнле ĕç те пире хирĕç те пырать.

ДЕЛИ, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Дели хулинчи радио çапла пĕлтерет: Батавие Англипе Индин Ява утравĕ çинчи çарĕсене пулăшма пысăк вăйсем пырса çитнĕ. Пулăшма пынă çарсен шутĕнче акăлчансен парашютлă чаçĕсем пур. Çав чаçсем хăй вăхăтĕнче Голландипе нимĕçсене хирĕç вăйлăн çапăçнă.

Карло Скорцăна тытса хупни

РИМ, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио çапла пĕлтерет: декабрĕн 15-мĕшĕнче Милан хулинче фашистсен партийĕн секретарĕ пулнă Карло Скорцăна тытнă. Орбис агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Скорца çынсем пĕлмен çĕрте пытанса пурăннă. Вăл пурăннă пӳлĕме темĕн чухлĕ тăрăшса аран-аран уçнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕ —2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, [illegible] пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство [illegible]

НГ 04036 Типография [illegible] Управления полиграфпромышленности при СМ ЧАССР. Тираж [illegible] экз.